25-мĕш çул тухать. Х... 15 пус.
1942 ДЕКАБРЬ 31 КĔÇНЕРНИКУН 302(6237) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Вырăнти удобренисем хатĕрлемелли уйăхлăх

Хĕл кунĕсем майĕпенех иртсе пыраççĕ. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш çуркунне çывхарать. Колхоз хресченĕсем тырпулсене çапса пĕтерсе çитес çуракине хатĕрлеме тытăнчĕç. Килес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешу пуçланать.

Иртнĕ çулта пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕçлерĕç. Çавна пула республика тухăçлă тырпул туса илчĕ, ăна, пĕтĕмпе илсе, вăхăтра çапса пустарчĕ. [illegible]

Анчах пирĕн кăçалхи çитĕнӳсемпе лăпланса пурăнма нимĕнле сăлтав та çук. [illegible]

[illegible]

Çак кăтартăва пурнăçа кĕртес майпа, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ уйăхлăха ирттересси çинчен уйрăм постановлени йышăнчĕ.

Вĕсем тислĕк хатĕрлесе турттарса тухма [illegible] заданисем çирĕплетсе пачĕç, вăл заданисене виçĕ кун хушшинче колхозсене çитерме тата вăл заданисем пурнăçа кĕнине куллен тĕрĕслесе тăма хушрĕç. [illegible]

Вырăнти удобренисем хатĕрлесе турттарса тухмалли уйăхлăх январĕн 1-мĕшĕнче ыран пуçланать. Партипе совет тата комсомол организацийĕсен задачи—çак уйăхлăха кашни колхоза хутшăнтарасси, вырăнти удобренисем хатĕрлес ĕçе пĕлсе организацилесси пулса тăрать.

Чăваш АССР-ĕнчи Вăрнар районĕнчи Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз

Колхоз председательне ВАСЯНИН юлташа

Сталин ячĕпе тăракан колхозăн колхозникĕсемпе колхозницисене, танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума укçа пухнăскерсене, тата Сире, Васянин юлташ, Хĕрлĕ Çаршăн тăрăшнăшăн тав тăватăп.

Манран салам йышăнăр.

И. СТАЛИН.

Мускав, Кремль

СТАЛИН юлташа

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Манăн икĕ ывăл отечественнăй вăрçă фрончĕсенче кĕрешеççĕ, вĕсенчен пĕри бронетанковăй чаçре кĕрешет. Эпĕ вара, вĕсен 60 çулхи ашшĕ, пирĕн тăван çĕршывăн патриочĕсен пуçарăвне йышăнса илсе, хам перекетлесе хăварнă 15.000 тенкĕ укçана танксен колоннине тума пысăк савăнăçпа Госбанка патăм.

Чăваш АССР-ĕнчи, Çĕмĕрле районĕнчи Егоркино ялсоветĕнчи «Большевик» колхоз колхозникĕ КОЛОЧКОВ Василий Герасимович.

„Маяк“ колхоз членĕсен патриотизмĕ

Колхоз председателĕ Минаев—100.000 тенкĕ, колхозник Латфуллин—50.000 тенкĕ хывнă

ЧКАЛОВСКОЕ, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Пирĕн республикăри колхозниксемпе трактористсем патне Сталин юлташ салам яни çинчен пĕлсенех, «Маяк» колхоз членĕсем пухă ва пуçтарăннă. Унта вĕсем çулпуç саламĕ çине мĕнле лайăхрах ответлесси çинчен сӳтсе-явнă.

— Колхозник-патриотсен пуçарăвне йышăнса, — тенĕ пухура колхоз председателĕ коммунист Минаев юлташ, — Хĕрлĕ Çара пулăшма пирĕн те хамăрăн перекетленĕ укçана парас пулать.

Танксен колоннисене тума Минаев юлташ 100 пин тенкĕ пама хапăл тунă.

Председателĕн ырă примерĕ ытти колхозниксемпе колхозницăсене те хавхалантарнă. Çавăнтах колхозник Латфуллин 50 пин тенкĕ, ферма заведующийĕ Гайнуллина 10 пин тенкĕ панă.

Танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума «Маяк» колхоз членĕсем пурĕ 500 пин тенкĕ хывнă.

Самолетсем тума 600.000 тенкĕ хыватпăр

КАЛИНИНО, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Тамбов облаçĕнчи колхозниксен патриотизмла примерне йышăнса, пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсене тата трактористсене Сталин юлташ саламлани çине ответлесе, Пушкин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар валли боевой самолетсем тума 600.000 тенкĕ укçа хываççĕ. Пирĕн колхозниксем хăйсен укçипе тунă самолетсене пирĕн земляка — Совет Союзĕн Геройне Ефимов юлташа пама ыйтаççĕ.

Çав самолетсем, чăвашсен мухтавлă ывăлĕ Ефимов юлташ ертсе пынипе, ирсĕр нимĕçсене вилĕм кӳччĕр.

Боевой самолетсем тума пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен перекетленĕ укçине савăнсах хывреç. Хам эпĕ 15 пин тенкĕ хыврăм. Филипп Никитин — 12.000 тенкĕ, Павел Ярусов, Евдокия Виноградова — 10-шар пин тенкĕ, Зоя Малова—6.000 тенкĕ хывреç.

ПУШКИН ЯЧĔПЕ ТĂРАКАН КОЛХОЗ ПРЕДСЕДАТЕЛĔ З. СТЕПАНОВ.

Çулпуçăн саламĕ çине ответлесе

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, декабрĕн 30-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсене тата трактористсене Сталин юлташ саламлани çине тата Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав туни çине ответлесе, районри чылай колхозсенче танксен колоннисене тума укçа хывас ĕçе вăйлатнă. Паянхи кун тĕлне «Красное Сормово» колхоз членĕсем 85.000 тенкĕ хывнă. Колхоз председателĕ Терентий Осипов, ытти колхозниксене пример кăтартса, танксем тума 10.000 тенкĕ панă.

Танксем тума укçа пухас ĕç «Янмурзино» колхозра та активлăн пырать. Ку колхозра кĕске вăхăт хушшинчех 175.000 тенкĕ хывнă. Çавăн пекех «Волга», «Тымар» тата «Четай» колхозсен членĕсем 50-шар пин тенкĕ хывнă.

И. ФИНДЮКОВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕнче

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пленумĕ «1942 ялхуçалăх çулĕн итогĕсем тата 1943 çулхи çуракине хатĕрленес задачăсем çинчен» йышăннă постановлени тăрăх, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла йышăннă:

1. 1943 çулта акмалли тырпулсен участокĕсенче усă курма вырăнти тата минераллă удобренисене хатĕрлесе турттарассине вăйлатас шутпа 1943 çулхи январĕн 1-мĕшĕпе февралĕн 1-мĕшĕ хушшинче вырăнти тата минераллă удобренисем хатĕрлесе турттармалли уйăхлăх туса ирттерес.

2. Тислĕке, торфпа минераллă удобренисене турттармалли районсем тăрăх тунă пилĕккунлăх заданисене çирĕплетес.

3. Райсовет исполкомĕсене тата ВКП(б) райкомĕсене пилĕккунлăх заданисене колхозсем патне виçĕ кунхи срокра çитерме тата вĕсем мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине куллен контроль туса тăрассине йĕркелеме хушас.

Удобренисем турттарма мĕнпур лашасен хисепĕнчен куллен 20 процентран кая мар уйăрмалла тата кашни колхозрах кулленхи заданисем тумалла.

4. Колхозсене удобрени валли хуласемпе район центрĕсенчен тата мĕнпур обществăллă (шкулсенчи, учреждениссемпе предприятисенчи) уборнăйсенчен фекали турттарас ĕçе организацилеме сĕнес; фекалипе торфпа, тислĕкпе тата кивĕ улăмпа хутăштарса компостсем туса хатĕрленĕ çĕрте усă курма сĕнес.

5. Уйăхлăх вăхăтĕнче колхозсемпе колхозниксен хуçалăхĕсенчи, предприятисемпе районри учрежденисенчи мĕнпур кĕлсене, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕсене пуçтармалла, малашне вара çав удобренисене пухăнса пынă май пуçтарса тăмалла.

Государствăна тырă парса татнă

ВĂРНАР. Районри колхозниксемпе колхозницăсем халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин юлташ Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсене тата трактористсене саламланине пысăк хавхаланупа кĕтсе илчĕç. Декабрĕн 28-мĕшĕ тĕлне районри колхозсем государствăна тырă памалли плана пур енĕпе те 100 процент тултарчĕç, аш-какай та 100 процентпех парса татрĕç. Кунсăр пуçне 1943 çулхи обязательство шучĕпе государствăна çĕнĕрен 3.000 пăт тырă, 2.200 пăт аш-какай пачĕç. Колхозсем авăн çапса пĕтерчĕç.

Хĕрлĕ Çар фондне тырпулпа аш-какай тата пахча-çимĕçсем парасси малалла пулса пырать.

С. КОРОТКОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.
И. НИТКИН,
Райисполком председателĕ.

Хĕрлĕ Çар фондне планран иртерсе 53 центнер тырă хывнă

СĔНТĔРВĂРРИ. Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз членĕсем паха ĕç пуçарчĕç. Вĕсем, государство умĕнчи парăмсене парса татнă хыççăн, хăйсен ытлашши тыррине Хĕрлĕ Çар фондне параççĕ. Çак пуçарăва пирĕн районри колхозниксем те ырларĕç.

Шуркассинчи Киров ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем Хĕрлĕ Çар фондне хума 200 пăт тырă пухса, ăна çийĕнчех хĕрлĕ обозпа хатĕрлев пунктне леçсе пачĕç. «Красная Армия», Сталин ячĕпе тăракан колхозсен членĕсем те Хĕрлĕ Çар фондне 200-шер пăт тырă пачĕç. Çак паха ĕçе районри ытти колхозсем те хутшăнаççĕ.

Н. КОНСТАНТИНОВ.

* * *

ИШЛЕЙ, декабрĕн 30-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Сĕньял Покровски ялсоветĕнчи «Пархикасси» колхоз (председателĕ Васюрков юлташ) 1942 çулхи государство умĕнчи пур обязательствăсене те парса татнă. 1943 çулта аш-какай памалли плана пĕтĕмĕшпех тултарнă.

Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз членĕсен чĕнĕвĕ çине ответлесе, колхозниксем Хĕрлĕ Çар фондне 85 килограмм аш-какай, 53 центнер тырă хывнă.

Колхоз кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăнах 1943 çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешме тытăнчĕ. Колхозниксем вăрлăхсене тасатса сортланă çĕрте хастарлăн ĕçлерĕç. Паянхи куна колхозăн пур йышши культурăсен вăрлăхĕсем те çителĕклĕ, вĕсене пурне те тасатса сортласа хунă. Хăмăт таврашсем çителĕклĕ, лашасене пăхас ĕçе лайăх организациленĕ.

З. МИТРОФАНОВА.

Вунă кун хушшинче 16 центнер сӳс-кантăр панă

ЕЛЧĔК, декабрĕн 29-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районри колхозсенче государствăна пама сӳс-кантăр хатĕрлес ĕç лайăхланчĕ. Декабрĕн 28-мĕшĕ тĕлне хатĕрлев пунктне пурĕ 118 центнер ытларах сӳс-кантăр леçнĕ. Кантăр вăрри памалли обязательствăна 127 процент тултарнă. «Октябрь», К. Маркс ячĕпе тăракан колхозсем государствăна кантăр вăрри планран ирттерсе пачĕç. «Ново-Тоскаево» тата ытти хăшпĕр колхозсем государствăна сӳс-кантăр хатĕрлесе памалли плана тултарчĕç.

З. ОСИПОВ,
Райсовет исполкомĕн председателĕ.

Уя 12.875 лав тислĕк кăларнă

ЕТĔРНЕ, декабрĕн 29-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районри колхозсем кăçал пĕтĕм ĕçе фронт ыйтнă хăвăртлăхсемпе туса пырса ялхуçалăх çулне ăнăçлă вĕçлерĕç. Нумай колхозсем 1943 çулхи çуракине хатĕрленме тытăнчĕç. Паянхи куна район 1943 çулта акма вăрлăхсем уйăрса çитерчĕ. Районри пур колхозсенче те пекех пур культурăсем тăрăх та вăрлăхсем çителĕклĕ. «Путь к социализму», Чапаев ячĕпе тăракан тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсем çĕç сĕлĕ вăрлăхне çителĕклĕ таран уйăрса çитереймен.

Ялхуçалăх машинисене, çуракинче кирлĕ ĕç хатĕрĕсене юсас ĕçе пур колхозсем те тытăнчĕç. Районра халь 17 тимĕрç лаççи ĕçлет, вĕсенче ĕçлеме тимĕрçсем çитеççĕ, ремонт тумалли материалсене çителĕклĕ таран хатĕрленĕ.

Нумай колхозсем агротехникăн хĕллехи мероприятийĕсене ирттерме планĕсем тунă, вăл плансене пурнăçа кĕртме тытăннă. Декабрĕн 25-мĕшĕ тĕлне районĕпе пурĕ уя 12.875 лав тислĕк кăларнă, 423 центнер кĕл, 425 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ.

Тĕслĕхрен, Стрелецкинчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз уя 950 лав тислĕк кăларнă. Вăрлăхлăх тырăсене сортлас ĕçе колхоз çак кунсенчех вĕçлет. Колхоз 1943 çулта МТС-ăн машинисемпе тата ăнăçлăнрах усă курма хатĕрленет. 1943 çулта пулмалли ĕçшĕн колхоз государствăна 10 тонна тырă пачĕ те.

Анчах калас пулать, районри нумай колхозсем хăйсен уйĕсенче юр тытса хăварас ĕçе пуçăнман-ха. Паянхи куна пурĕ те 44 гектар çинче çеç юр тытса хăварнă.

И. ЛЕПЕШКИН,
Райçĕрç пайĕн главнăй агрономĕ.

1943 çулшăн аш-какай пăраççĕ

ÇĔМĔРЛЕ, декабрĕн 30-мĕшĕ. (**Хамăр корр.**). Районри пур колхозсем те государствăна 1942 çулшăн аш-какай парса татрĕç. Нумай колхозсем халь государствăна 1943 çулшăн аш-какай параççĕ. Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхоз 1943 çулшăн 3.813 килограмм аш-какай пачĕ. «Комбайн», «Искра», «Лесной огонек» тата ытти нумай колхозсем государствăна тырă памалли плана ытлашшипех тултарнă.

Х. ЛИСИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 29-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 29-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Сталинградран** кăнтăралларахра ăнăçлăн наступлени туса пынă тата халăх пурăнакан темиçе пункта, çав шутра **Котельниково** хулипе чугунçул станцине, **Яшкуль** ятлă район центрне тата **Торговое** ятлă халăх пурăнакан пысăк пункта йышăнса илнĕ. Котельниково районĕнче трофейăсем нумай тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра тата **Центральнăй** фронтра пирĕн войскăсем наступленилле çапăçусем туса пыраççĕ.

Декабрĕн 28-мĕшĕнче Сталинград районĕнче противникăн 31 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Декабрĕн 28-мĕшĕнче пирĕн авиацичăсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 5 танкне тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 150 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă, артиллерин 3 батарейине пусарса лартнă, 2 поезда çĕмĕрнĕ, боеприпассен складне сирпĕтерсе янă, противникăн пехотине икĕ ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн подразделенисем активлăн кĕрешсе 300—400 метр малалла кайнă. Противника пĕр заводăн темиçе цехĕнчен хĕссе кăларнă.

Пирĕн боецсем йышăннă цехсенче тата юнашар ларакан çуртсенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 300 виллине шутласа кăларнă. 2 оруди, 13 пулемет тата 4 миномет тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем противник çине персе тăнă. Темиçе участокра пирĕн подразделенисем нимĕçсене атакăланă та противникăн окопĕсен пĕрремĕш ретне йышăнса илнĕ. Гитлеровецсем хăйсен позицийĕсене каялла турттарса илес тесе хăтланни ăнăçман. Пирĕн пĕр соединенин боецĕсем нимĕçсен 7 танкне, 2 бронемашинине персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă тата 400 гитлеровецă çити вĕлернĕ.

* * *

Сталинградран кăнтăралларахра пирĕн войскăсем, наступлени туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Халăх пурăнакан пĕр пысăк пунктăн, пирĕн подразделенисем вăркăнса кĕнĕскерĕн, урамĕсенче хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Н-ски стрелковăй чаçăн боецĕсем, танкистсемпе пĕрле кĕрешсе, нимĕç пехотин икĕ батальонне çапса аркатнă. 760 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. 390 çынна тыткăна илнĕ. 3 танк, 14 оруди, 19 пулемет, 15 автомашина тата винтовкăсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем противникăн икĕ пысăк отрядне çапса аркатнă та 1.500 салтакпа 80 офицера тыткăна илнĕ. Çавăн пекех тата 12 самолет, 30 оруди, 170 пулемет, 40 миномет, 50 автомашина, 400 лав, 300 лаша тата майракаллă вылăх 1.500 пуç ытла тытса илнĕ.

* * *

Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра пирĕн войскăсем наступлени туса пынă. Совет чаçĕсене малалла кайма чарас тесе, противник инçери тылран васкаса çĕнĕ чаçсем иле-иле пырса, вĕсене контратакăсем тума ярать. Халăх пурăнакан пĕр пунктăн районĕнче нимĕçсем умлăн-хыçлăн виçĕ хутчен контратака тунă. Пирĕн подразделенисем противника сирсе ярса малалла кайнă та çав халăх пурăнакан пункта йышăнса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 600 виллине çити тата персе çĕмĕрнĕ 5 танкĕ выртса юлнă. Артиллерин 2 батарейине, 11 пулемет, 6 миномет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем противникăн пĕр полк пехотине сапаласа янă, унăн пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем уйрăм участоксенче наступленилле çапăçусем туса пынă. Великие Луки районĕнче Совет чаçĕсем противникăн хирĕç тăмалли темиçе узелне йышăнса илнĕ тата нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă.

Ржевран хĕвеланăçнерехри районра Н-ски часть активлăн кĕрешсе нимĕçсен 16 дзочĕпе блиндажне ишĕлтернĕ, артиллерин 2 батарейине пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен пехотине икĕ ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Нальчикран хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем хăйсен позицийĕсене тĕреклетнĕ тата хăйсен вăйĕсен пĕр пайĕпе наступленилле çапăçусем туса пынă. Халăх пурăнакан пĕр пунктшăн пынă çапăçура гитлеровецсен 100 салтакĕпе офицерне çити пĕтнĕ. Пирĕннисем 20 пулемет, сывлăш вĕрсе хăпартнă 11 кимĕ, 150 лаша тата боеприпассемпе продовольствин склачĕсене тытса илнĕ. Тепĕр участокра противникăн икĕ батальон таран пехоти тата 40 танкĕ хăйсен маларах çухатнă позицийĕсене каялла тытса илесшĕн пулнă. Гитлеровецсен контратакисене сирсе янă. 15 танк пĕтерсе тăкнă тата противникăн 300 ытла салтакĕпе офицерне вĕлернĕ.

* * *

Противникăн бомбардировщикĕсен группи истребительсем хӳтĕлесе пынипе Мурманск хулине тапăнма хăтланнă. Новожилов юлташ командир пулса тăракан чаçăн летчикĕсем противникăн самолечĕсене хирĕç тухнă та вĕсене атакăланă. Хула патне пымалли инçетри вырăнсенче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери пенипе нимĕçсен пĕр истребительне тата икĕ бомбардировщикне персе ӳкернĕ.

* * *

Минск облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ икĕ кун хушшинче противникăн яланхи чаçĕсемпе вăйлăн çапăçнă. Нимĕçсем партизансене хирĕç 7 батальон пехота тата танксемпе артиллери янă. Çав çапăçусенче совет патриочĕсем тăшманăн 240 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Могилев облаçĕнче кĕрешекен партизансен «За родину» ятлă отрячĕ нимĕçсен продовольстви турттарса пыракан эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Крушени пула 58 гитлеровец пĕтнĕ.

Декабрĕн 30-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 30-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем **Сталинградран** кăнтăралларахра, **Дон** шывĕн **вăтаçĕрĕнчи** районра тата **Центральнăй** фронтра малтанхи еннелле наступленилле çапăçусем туса **пынă**.

* * *

Сталинградăн заводсем **вырнаçнă** районĕнче пирĕн подразделенисем, противник вăйлăн хирĕç тăнине сирсе ярса, тăшманăн 82 дзочĕпе блиндажне тытса илнĕ. Нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ.

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 30-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

Сталинградран сурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем [illegible] Н-ски часть [illegible] 400 гитлеровеца çити тата 8 орудие пĕтерсе тăкнă. [illegible] Тепĕр участокра пирĕн боецсем тăшманăн окопĕсене хĕрсе кайнă. [illegible] тасатас тесе çапăçаççĕ.

* * *

Сталинградăн кăнтăрарахра пирĕн чаçсем, наступлени туса, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. [illegible] 1.800 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Тытса илнĕ трофейсем: 52 автомашина, 15 оруди, 45 миномет тата боеприпассен 4 складне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Дон шывĕн вăтаçĕренчи районра пирĕн войскăсем наступлени туса пынă. [illegible] Çапăçу хирĕнче тăшманăн [illegible] 30 автомашина тата снарядсем [illegible]

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем наступлени туса пынă. Великие Луки районĕнче совет частĕсем [illegible] гитлеровецсем [illegible] Юлашки икĕ кун хушшинче нимĕçсен 257-мĕш пехотнăй [illegible]

полкĕн 2-мĕш батальонĕн штабне аркатса тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ. Противникăн 3 самолетне цăшалсемпе тата пулеметсемпе персе ÿкернĕ.

Ржевран хĕвеланăçнерехри районра Гришин юлташ командир пулса тăракан гвардейски артиллери чаçĕ, пирĕн пехотăна пулăшса пырса, нимĕçсен 3 танкне, бронемашинине, ултă кĕпçеллĕ 4 минометне, артиллерин 3 батарейине пĕтерсе тăкнă тата артиллерин 7 батарейине пусарса лартнă.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем хăйсен рубежĕсене тĕреклетнĕ тата противник çине персе тăнă. Н-ски чаçăн артиллерисчĕсем нимĕçсен 8 танкне персе çĕмĕрнĕ тата противникăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Украинăри партизансен отрячĕ, Сумы облаçĕнче кĕрешекенскер, нимĕç батальонĕн штабне çапса аркатса, 70 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Сумы облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ, нимĕçсен фашистла захватчикĕсемпе çапăçса, тăшманăн 150 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Аялараххра нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тата вĕсен итальянец хÿрешкисем Воронеж облаçĕнчи Садково ялĕнче тискер ĕçсем туни çинчен çырнă акта пичетлетнĕ: [illegible] «Сывă пултăр Хĕрлĕ Çар!» тенĕ. [illegible] Акта Садково ялĕн çыннисем алă пуснă: Наталья Руденко, София Гладыченко, Пелагея Жигайлова тата ыттисем те.

Украинăри партизансем вăйлăн пыра-пыра çапаççĕ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, декабрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС спецкорре). Украинăн облаçĕсемпе районĕсенче, нимĕçсен фашистла захватчикĕсем вăхăтлăха оккупациленĕскерсенче, партизансем вăйлăн [illegible] Украинăри партизансем [illegible] фашистсен 46.055 салтакне офицерне вĕлернĕ, нимĕçсен 34 штабне аркатса тăкнă, 148 эшелона ÿпнтерсе янă, 2.656 вагона çĕмĕрнĕ. [illegible] 1.426 грузовой автомашина [illegible] 400 [illegible] 117 склада, 13 самолета тата 200 ытла танкпа танкеткăна çунтарса е сирпĕнтерсе янă.

Пур йышши хĕçпăшалсемпе [illegible] партизансем противникран 1.772 салтакне офицерне вĕлернĕ, 3 самолета, 3 танка, 8 бронемашинăна, пĕр бронепоезда, 36 пулемета, 45 автомашинăна, 8 [illegible] пĕтерсе тăкнă, чугунçул çинче 17 крушени тунă, [illegible] 12 складна сирпĕнтерсе янă.

Тăшманăн тылне пыра-пыра çапса, партизансем трофейсене нумай тытса илесçĕ. [illegible] Партизансен 4 отрячĕ кăна 22 тупă, 107 миномет, 467 пулемет, 225 автомат, 3.677 винтовка, боеприпассен 257 лав, 253 автомашина, 10.750 метр телефон кабельне тата ытти те тытса илнĕ.

[illegible]

Захватчиксене хирĕç кĕрешес ĕçре Украинăри партизансем [illegible] Вĕсем хушшинче врачсем, медсестрасем, разведчиксем, снайперсем [illegible] нумай. Комсомолка Софья [illegible]

Хĕрлĕ Çар ăнăçлă наступлени туса пыни çинчен калакан хыпарсем партизансене тата хавхалантараççĕ. [illegible]

Фронтовиксен çырăвĕсем

1. МАНĂН ПУРĂНАС КИЛЕТ

Уйхирсемпе вăрмансене сивĕ хĕл шурă çивиттипе витрĕ. Кăнттамăн ларакан йывăçсем шурă тум тăхăнчĕç. Вăрманта нимĕн шухăшсăр савăнса юрлакан вĕçенкайăксен сасси илтĕнмест ĕнтĕ. Эпĕ юратакан чăпар куккукăн сасси те çитес çуркуннесĕр илтĕнес çук.

Эпĕ çуркуннене, пĕтĕм çĕршыва илем кÿрекен çуркуннене, вăрçă шавĕ ăнланнă çуркуннене кĕтетĕп. Çавăн пек çуркунне — хĕлле-и, çулла-и пулать вăл—пурпĕрех çитет.

Манăн пурăнас килет! Манăн çут тĕнче илемĕпе савăнас килет. Тÿрем уйхирлĕ Чăваш çĕршывĕнче пĕр пĕчĕк ялта манăн юратнă мăшăрăм пурăнать. Вăл мана çĕнтерÿпе таврăнасса кĕтет. Манăн хам çуралнă тăван килсуртра тăван атте-аннене йăпатса, телейлĕ пурăнас килет. Манăн тăван çĕршыва татах та ытларах илем кÿрессишĕн пĕтĕм вăя хÿрса ĕçлес килет.

Манăн çын пек пурăнас килет! Çавăнпа та тискер кайăк пулса кайнă нимĕçе вĕлермелле. Çавăнпа эпĕ пеме — винтовка, чикме—çивĕч хĕç тытрăм. Пирĕн телейлĕ пурнăçа ишĕлтерме хапсăнакан тăшмана вĕлермелле. Унсăрăн вăл пире вĕлерет. Эпĕ, тăван çĕршывăн мĕнпур ывăлĕсемпе пĕрле, тăшмана хирĕç хаяр кĕрешĕве тухрăм. Çак кĕрешÿре эпĕ хамăн пурнăçа шеллемĕп, мĕншĕн тесен, эпĕ тăван çĕршывшăн, хамшăн çапăçатăп.

Çапăçу хирĕнче эпĕ хăрама пĕлместĕп. Мĕншĕн тесен хăравçă — вилет, унăн виличченех ячĕ çĕрет. Хăюлли—тăшмана çĕнтерет, хăюлли вилсен те унăн ячĕ çĕрмест, ĕмĕрe юлать.

Манăн пурăнас килет! Анчах малтан тăшмана çапса аркатмалла. Тăшман аманнă тискер кайăк пек, хăй хыççăн юнлă йĕрсем хăварать. Вăл, тем тума та хатĕр пулса, шăлне шатăртаттарать. Ăна текех иртĕхме памалла мар хăвăртрах пĕтермелле.

Пирĕн пурăнас килет! Апла пулсан, пурте—фронтра та, тылра та хăвăрăн мĕнпур вăйсене çĕнтерÿ туптанă çĕре парăр! Тăван çĕршывшăн нимĕн те ан хĕрхенĕр! Тăван çĕршыв пирĕншĕн ырă пурнăç кÿнĕ, тăшмана çĕнтерсен, пурнăç татах та ырăрах пулĕ.

И. Я. ТЕНЮШЕВ.

2. СНАЙПЕРСЕМ ПАТĔНЧЕ

Вĕсем ир пуçласа çĕрле пуличченех засадăра. Кашни снайпер, хăйĕн напарникĕпе малтанах сăнаса палăртнă стрелковăй ячейкăна пырса вырнаçать те, нимĕçсене пĕр сиктермесĕр касчченех сыхлать. Хăшĕсем тата йывăç тĕмми хÿттинче, куçĕсене вылятмасăр, тăшман территорийĕ çине пăхса выртаççĕ. Кун каçиччен пĕр нимĕçе те персе вĕлереймесен вара, снайперсен çав кун ахалех сая каять. Анчах снайперсен ун пек кунсем сайра пулаççĕ.

Нимĕçсем блиндаж тума тытăннă. Хăшĕсем кĕреçесемпе çĕре чакалаççĕ, теприсем пĕренесем йăта-йăта пынă. Старши сержант Алексей Цветков пĕрене йăтса пыракан икĕ гитлеровец çине куçа вĕçертмесĕр тинкерсе пăхнă. Нимĕçсем блиндаж пулакан вырăна çывхарса пынă чухне, снайпер малта пыракан нимĕç çине персе янă. Фашист çавăнтах тĕшĕрĕлсе аннă.

— Иккĕмĕшĕ çырманалла тарса ĕлкĕрчĕ,—каласа парать снайпер Цветков. Ик-виçĕ сехет хушши тинкерсе пăхса выртнă вăл. Кас пуласпа нимĕç çырмаран тухнă та каялла утма тытăннă. Снайпер вара ăна çавăнтах персе вĕлернĕ.

Çакăн пек чухне снайперсемшĕн питех те аван. Кун ахаль сая каймасть.

Тăвай районĕнчи Чутейри «Сталь» колхозри Алексей Цветков фронта килсен комсомола кĕчĕ. Комсомол билетне алла илнĕ чухне, вăл çар ĕçне куллен-кун вĕренсе, хăйĕн пĕлĕвне ÿстерсе пыма тата нимĕç оккупанчĕсене ним хĕрхенмесĕр вĕлерме сăмах пачĕ. Кĕске вăхăт хушшинчех миномет ĕçне лайăх вĕренсе çитрĕ. Малтанхи вăхăтрах вăл минăсем йăтаканни кăна пулнă пулсан, кайран минометнăй расчет командирĕ, старши сержант пулчĕ. Унăн расчечĕ сахал мар гитлеровецсене леш тĕнчене ăсатнă.

Комсомолец Алексей Цветкова снайперсен курсне вĕренме яраççĕ. Кунта вăл винтовкăран тĕл пеме вĕренсе тухать. Пĕр уйăх ытларах пирĕн оборонăн малти линийĕнче, засадăра пулса, вăл 27 нимĕçе персе вĕлернĕ. Командовани 19 çулхи комсомолеца Правительство наградине илме тăратнă.

— Гитлерла мерзавецсене малашне татах та ытларах вĕлерсе пырăп,—тесе шантарса калать Цветков юлташ.

Снайперсен командинче узбек Артык Газиев пуриччен те малта пырать. Унăн счечĕ çинче 54 нимĕç. Комсомольски районри Çĕнĕ Мăратри Никандр Михайлович Немцевăн счечĕ çинче 33 нимĕç.

Пирĕн снайперсем фрицсемпе ганссене нихăçан та канăç памаççĕ. Пирĕн çĕр çине килсе кĕнĕ тăшмансене перепере вĕлерсе, вĕсем тăшманăн кунçулне кĕскетеççĕ тата пирĕн çĕнтерĕве çывхартаççĕ.

Старши лейтенант Т МАЙОРОВ.

Рабочисене пахча-çимĕç сутаççĕ

Калининскийри районри колхозниксем промышленность предприятийĕсенче ĕçлекен рабочисене валли государство хакĕпе пахча-çимĕç нумай сутрĕç. Шупашкарти Н-ски заводри рабочисене валли колхозниксем çĕрулми, пахча-çимĕçсем лесе параççĕ.

Шĕнерти «1-ое Мая» колхоз членĕсем рабочисене 256,25 центнер çĕрулми, 500 килограмм кишĕр, 250 килограмм купăста лесе пачĕç. Çавăн пекех Услапари «Броневик», Элшикри «Пучах», Тури Кăкаршри «Правда» колхозсенчи колхозниксем те хăйсен килĕвĕнчен рабочисене валли государство хакĕпе сĕтулми тата пахча-çимĕç нумай сутрĕç. «Правда» колхоз членĕсем М. Гордеев, Е. Яковлева, П. Петрова юлташсем кашнийех пĕрер центнер пахча-çимĕç сутнă.

Фронт валли ĕçлекен заводсенчи рабочисене колхозниксем куллен пулăшса тăраççĕ. Вĕсене апат-çимĕç продукчĕсем парса пулăшаççĕ.

Г. МАТВЕЕВ.

Пирĕн землякçем

Хăюллă сапер

1941 çулхи ноябрь уйăхĕ. Урса кайнă тăшман пирĕн тăван çĕршывăн столици — Мускав патнелле [illegible] Кунта пирĕн земляк Федр Волков [illegible] Хыра—Мускав. Пĕр уттăм та чакмалла мар!—Çакăн пек тăван çĕршывăн, аслă Сталинăн приказĕ.

Старши сержант Волков тăракан подразделенине [illegible] нимĕçсем танкпа тăкатса [illegible] тăшмана малалла ярас мар тесе [illegible] Çапăçу пуçланнă. Волков хăйĕн [illegible] кăвакарчăнсемпе пĕрле [illegible] Çапăçу хирĕнче [illegible] нимĕçсем çине пырса [illegible] ниме́нле вут-çулăма пăхмасăрах, минăсем лартса тухать те, алла гранатăсем тытса тăшманăн танкĕсене кĕтсе илме

хатĕрленет. Тăшманăн танкĕсем çине пирĕн артиллери персе тăрать. Анчах сĕмсĕр тăшман малаллах хирĕнет. Броньăланă тискер кайăксем çав вăхăтра Волков лартса тухнă минăсем çине пырса кĕреççĕ, малта пыракан 3 танк сирпĕнсе каять, ун хыççăн вара татах та тепĕр икĕ танк сиенленет. Ытти танксем малаллах шăваççĕ, анчах татах минăсем çине пырса тăрănаççĕ.

Тăшманăн речĕ саланса каять. Старши сержант Волковпа унăн боецĕсем танксем çине гранатăсем вăркăнтараççĕ. Волков çав çапăçура хăйĕн аллипе икĕ танка çĕмĕрет, анчах хăй те йывăр аманать. Хаяр çапăçу. Çакăн пек чухне юлташсене ăçтан пăрахса хăваратăн-ха? Волков хăйĕн юлашки вăйĕсепе пухса паттăр боецсене малалла ертсе каять. Çапла старши сержант Волков юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделени темиçе минута хушшинче тăшманăн 16 танкне пĕтерсе тăкать, Волков хăй вара 5 танка стройран кăларать.

Çакăн пек вăйлăн аркатнине кура, тăшманăн ытти танкĕсем каялла çавăрăннă та тарма тытăннă, анчах вĕсем татах пирĕн артиллерин вут-çулăмĕ айне лекнĕ.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿре паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн старши сержанта Федор Степанович Волков юлташа правительство чаплă награда—Ленин орденĕ панă.

Волковпа пĕрле вĕсен чаçĕнче пирĕн землякçем татах та пулнă. Çапла, Сĕнтĕр районĕнчи Муркавăш ялĕнче çуралса ÿснĕ Романов юлташа çапăçури паттăр ĕçсемшĕн Хĕрлĕ Ялав орденĕ панă.

Волков юлташ Сĕнтĕр районĕнчи Çатракасси ялсоветне кĕрекен Кÿрекаç ялĕнче çуралса ÿснĕ. 1933 çултан пуçласа 1936 çулччен Хĕрлĕ Çарта пулнă. Белофиннсене хирĕç пыракан кĕрешÿре паттăрлăх кăтартнăшăн ăна командовани тав тунă. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче вăл саперсен шкулĕнче вĕренсе тухса, саперăн питех те йывăр ĕçне туса пынă.

Халĕ Волков юлташ хăйĕн тăван ялĕнче сывалса пурăнать. Вăл хăвăртрах тÿрленсе çитсе татах çапăçу хирне тухма, хамăрăн тăван çĕршыва ирсĕр нимĕç захватчикĕсенчен хăвăртрах тасатма ĕмĕтленет.

П. ГРИГОРЬЕВ.

Квартали плана тултарнă

Н-ски завод (директор заместителĕ Бувин юлташ) Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăннăранпа лайăх ĕçласа пырать. Уйăхри плансене иртерсе тултарнăшăн Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕпе тимĕрçĕ Халăх Комиссариачĕсем завода пĕрре çеç мар ырларĕç тата премилерĕç. Ноябрь уйăхĕнчи ĕçсен итогĕсем тăрăх ВЦСПС завода пĕр промышленность енĕпе лайăх ĕçлет тесе палăртрĕ, тепĕр промышленность тăрăх малтан премин пама йышăнчĕ.

Ăмăртура малта пыни завод коллективне хăвăртлăхсене чакармасăр ĕçлеме хавхалантарать. Çĕнĕ çула çĕнĕ çитĕнÿсемпе паллă тума пуçтарăнса, коллектив тăваттăмĕш кварталти ĕçсен планне срокчен 3 кун малтан тултарчĕ.

Завод пĕр уйăх ĕнтĕ çулталăкри программăран иртерсе продукци туса кăларать. Çак вăхăтра вăл планран иртерсе çĕршыва фронта темиçе миллион тенкĕлĕх продукци пачĕ.

Заводри цехсенчен Кинзбургски юлташ ертсе пыракан цех малта пырать. Вăл заводăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне пиллĕкмĕш уйăх ĕнтĕ хăйĕн аллинчен вĕçертмест. Цех ноябрьти заданине срокчен 4 кун малтан тултарчĕ. Ку уйăхра та виççĕмĕш кун ĕнтĕ заданирен иртерсе ĕçлет.

Ăмăртура тунă çитĕнÿсемшĕн цех начальникне Кинзбургский юлташа Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланă.

Çавăн пекех Просяк юлташăн цехĕ те лайăх ĕçлет, декабрĕн 30-мĕшĕ тĕлне вăл уйăхри заданиe ытлашшипех тултарнă.

--0--

Финанс планне тултарнă

СЕНТЕРВАРРИ. Районри финанс агенчĕсем тăваттăмĕш кварталта укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлерĕç. Çавна май район тăваттăмĕш кварталти финанс планне 103 процент тултарчĕ. Укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе уйрăмах финанс агенчĕ Кириллова юлташ лайăх ĕçлет. Унăн участокĕнчи Кушниково ялсовечĕ плана 250 процент, Юртакасси ялсовечĕ 206 процент тултарчĕç.

Н. КОНСТАНТИНОВ.

--0--

Выльăх-чĕрлĕхе чир-чĕртен сыхлас ĕçе лайăхлатас пулать

ВĂРНАР. Кадăш колхозĕн фермисенче выльăх-чĕрлĕх йышлă. Çамрăк выльăхсене пăхса ÿстерессишĕн, выльăхсен продуктивноçне ÿстерсе пырассишĕн кунта çулсерен тимлĕн ĕçлеççĕ. Кăçал колхоз государствăна сĕт-çу, çăмарта, аш-какай сентябрь уйăхĕнчех парса татнă, 1943 çулшăн та нумай пачĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1942 çулти плана пур йышши выльăхсем енĕпе те иртерсе тултарнă. Ĕнесен хисепĕ 75 пуçа, сыснасен хисепĕ 60 пуçа çитрĕ. Кайăк-кĕшĕк фермине 252 чăхчĕпсемпе хур-кăвакал пур.

Государство планĕ тăрăх колхозăн фермине сурăхсен хисепĕ 140 пуçа çитмелле пулнă. Çак плана та колхоз пĕтĕмĕшлех пурнăçларĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен çамрăк выльăхĕсене контрактаци шучĕпе фермăна пачĕç. Çапла, кăçал колхозăн фермине аякран 29 путек хушăнчĕ. Ферма работникĕсем путексене тĕрĕс-тĕкĕл пăхса çитĕнтерĕç.

Анчах та выльăх-чĕрлĕхе ветеринари енĕпе пулăшу парассине начар организациленĕ. Районри ветеринари поликлиники колхозсен ыйтăвĕ çине çаврăнса пăхмасть.

Колхоза халех пулăшу кирлĕ. Обществăллă выльăх-чĕрлĕхе чир-чĕртен сыхлас ĕçе районра тĕпренех вăйлатмалла.

Н. НИКОЛАЕВ.

Ют çĕршывсенче

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШУЛЛĔ ШТАТСЕНЧЕ НОЯБРЬТЕ ХĔÇПĂШАЛСЕМ ТĂВАССИ ÿСНĔ

ВАШИНГТОН, декабрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешуллĕ Штатсенче хĕçпăшалсем тăвас ĕç управленийĕн руководителĕ Нельсон каланă тăрăх, Америкăри Пĕрлешуллĕ Штатсенче çар хатĕрĕсем тăвасси ноябрь уйăхĕнче 1940 çулхи çу хыççăнхи уйăхсенчи кирек хăшинчен те ытларах ÿснĕ (США хĕçпăшалсем тумалли программăна 1940 çулхи çулла пурнăçлама тытăннă). Хĕçпăшалсем тăвасси ноябрь уйăхĕнче октябрьтинчен 12 процент ÿснĕ. Ноябрь уйăхĕнче самолетсем октябрьтинчен 18 процент, орудисем — 13 процент, ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем — 9 процент ытларах туса кăларнă. Хĕçпăшалсем тăвасси японецсем Пирл-Харбора тапăннăранпа 4 хут ытла ÿснĕ.

Нельсон каланă тăрăх, пĕр моторлă истребительсем тăвасси уйрăмах вăйлăн ÿснĕ. Вăтам бомбардировщиксем, флот валли истребительсем тата пысăках мар транспортнăй машинăсем туса кăларасси те палăрмаллах ÿснĕ. Çĕнĕ заводсене хута ярса пынăçемĕн авиаци хатĕрĕсем тăвасси тата ытларах ÿссе пырĕ, тенĕ Нельсон. Ноябрь уйăхĕнче çар карапĕсем октябрьтинчен 9 процент ытларах, суту-илÿ суднисем — 26 процент ытларах туса кăларнă. Ноябрь уйăхĕнче мĕнпурĕ 80 суту-илÿ судни тунă, вĕсен тоннажĕ пĕтĕмпе 874 пин тонна шутланать. Ноябрь уйăхĕнче Аслă кÿлĕсенчи верфьсенче океанра çÿремелли пĕр-ремĕш грузовой пароход туса кăларнă.

Нельсон каланă тăрăх, Пĕрлешуллĕ Штатсен вăрçă расхочĕсем 1943 çулта 90 миллиард доллартан ытларах пулĕç (1942 çулта вĕсем 52 миллиард доллар пулнă). Нельсон çакна палăртнă: промышленность халĕ хăйĕн производство хăвачĕпе ĕлĕкхинчен туллирех усă курать, анчах та унăн продукци ытларах туса кăларма чылай пысăк резервсем пур-ха, тенĕ.

ДЕ ГОЛЛЬ ИДЕНПА КАЛАÇНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Де Голль генерал Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министерствине пырса, унта Иденпа калаçнă.

ЖЮЭН ГЕНЕРАЛА ФРАНЦУЗСЕН ÇУРÇĔР АФРИКĂРИ ВĂЙĔСЕН ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИЙĔ ВЫРĂННЕ ЛАРТНĂ

ЛОНДОН, декабрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Çурçĕр Африкăра союзниксен штабĕ çапла пĕлтерет: Жюэн генерала французсен Çурçĕр Африкăри вăйĕсен главнокомандующийĕ вырăнне лартнă. Халиччен çав вырăнта Жиро генерал ларнă, халĕ ăна Франци Африкин верховнăй комиссарĕ вырăнне куçарнă.

ПЕТЭН ЗАЯВЛЕНИЙĔ

ЖЕНЕВА, декабрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Виширен пĕлтернĕ тăрăх, Петэн заявлени тунă. Çав заявленире вăл французсен Çурçĕр Африкăри деятелĕсене «сутăнчăксем» тесе каланă; вăл çав деятельсем эпир Петэнпа килĕшсе союзниксемпе пĕрлештĕрĕмĕр, тесе калаçнине сирсе янă. Петэн çав деятельсене вĕсем Англипе Америкăн экспедицилле вăйĕсене хирĕç тăма хушакан приказа пăснăшăн айăпланă. «Жирона эпĕ хам ятпа ĕçлеме чарататăп,» тенĕ Петэн.

ЮГОСЛАВИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ОТСТАВКĂНА ТУХНĂ

ЛОНДОН, декабрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Югославин Иованович пуç пулса тăракан правительстви (вăл Лондонра ĕçлет), кабинета улăштарма май парас тесе, отставкăна тухнă. Рейтер агентстви Югослави çыннисен официально йĕркепе пĕлтернине сарать, вăл пĕлтерÿре çапла каланă: улăштарнă правительствăн пуçĕнче каллех Иованович тăрĕ тесе шутлаççĕ, тенĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Наркомпросу Чувашской АССР срочно требуются: бухгалтер-ревизор, экономист-плановик, кассир.
Жилплощадь предоставляется. Адрес: Чернышевская, 6.

Трубочистному бюро Чебоксарского добровольно-пожарного общества требуются трубочисты. Оплата сдельная. Предоставляется общежитие: Обращаться: г. Чебоксары, Красная площадь, дом № 33.

Чувашторгу требуется бухгалтер-ревизор.
Обращаться по адресу: Чебоксары, ул. Ленина, 11.

Пропала лошадь в гор. Канаше. Карей масти, жеребец, 1940 года рождения, кличка «Борис».
Знающих местонахождение просим сообщить по адресу: колхоз «Пролетарий», Комсомольского района.

Республиканской конторе Инкубаторно-птицеводческих станций Наркомзема Чувашской АССР требуются: бухгалтера, ст. механики и машинисты на нефтяных двигателях.
Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, дом № 7, Наркомзем ЧАССР, Контора ИПС.

Срочно требуются на постоянную работу на Гидроэлектростанциях работники следующих специальностей: техники электрики, электромонтеры, кузнец, электросварщик, механик, бухгалтер.
Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, ул К. Маркса, дом № 7.
ЧУВАШСЕЛЬЭЛЕКТРО.

Чебоксарской чулочной фабрике требуются на постоянную работу инженер-строитель и главный механик фабрики. С предложением обращаться по адресу: Красная площадь, 1, Отдел кадров Чулочной фабрики.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн 3—29, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1154 Типография № 1 Управления полиграф промышленности СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 58 84 п.